К-10

# КАПКĂН

2-мĕш №

## Ч. С. С. Р.

Хăш чух тĕк тăвă çĕртех ыратман пуç ыратаť. Хăш чух ыратаканнийĕх ыратми пулаť. Йе тата пит „ăслă“ урасем пуçа канăç памаççĕ, йе „ăслă“ пуç урисене канăçлăх памасť.

Пурнăçра тĕрлĕ пулаť!

Чăваш опласĕнче, халичен пулман уйесра, ответлă йулташ Лука Луккич Чăваш Респуплĕкĕ пулмалла тенине илтнĕ. Çав вăхăтрах пĕр йулташĕ ăна шўт туса:

— Респуплĕк пулсан сана нарком тăвапăр,—тенĕ.

Çакна илтсенех Лукка Луккич çĕр çывăрмасăр нарком пуласса ĕмĕтленсе иртерет.

Лукка Луккич шурса кайаť, шухăшпала апат çими пулаť. Саңатти пĕтсен киле таврăнсан арăмĕ кушак пек, çемçен:

— Луккич, аťа апат çийер, тутли, ес йуратни пур,—тесе апат çиме чĕнсен, Луккич урса кайса арăмне урнă йытă пек тулласа пăрахаť:

— У, у мур хирешшĕ, шухăша пăтратрăн,—тесе çухăрса пăрахаť.

Çапла çухăрса илсен Луккич хăй капинетне пăрахса кайаť. Унта çемçе тиван çине выртса райа кусна пек телейлĕ выртаť. Çав вăхăтрах выртнтан сике сике тăрса нарком пулсан мĕнле пурăнассине реппетитси туса илет.

— Маларах хатĕрленсен авантарах,—тет хăйне хăй. Чи малтан вăл йепле „рысакс мпе“ çўрессине туса илет:

— Тру, тру! Пошол! Ей, сторонись! тесе хайаррăн кăшкăрса йараť, хăй аллисене тилкепе тытнă пек чăмăртаса ăйăр пек каллĕ-маллĕ чупкалаť.

Унтан капине ра ĕçпе пыракансене йепле хăй патне кўртессе аставаť.

— Кхăм, кхăм!—тесе ўсĕрсе илет, сĕтел хушшине ларса.

— Вам что угодно! тесе кăшкăрса илет арăмне. Ес очеретсĕр кĕнĕ. Ей швейтсар кăлар кăна,—тесе хăйех арăмне тĕрткелесе кăларса йараť.

— Ех, турçăм! Мĕн пулчĕши кăна!—сехĕрлевет арăмĕ.

Пĕр сăмахран Луккич çывăрми пулаť. Шухăша кайса арăмĕ çывăрма чĕнсен те каймасť.

— Ман Совнарком саççетанине каймалла,—тет. Ачине швейтсар вырăнне шутласа:

— Вызовите мне из гаража автомобиль,—тет.

Çав вăхăтра Луккичăн йулташĕ чупса пырса кĕрет:

— А, Луккич, сывăи?

— Простите! Я тороплюсь, на заседание Совнар...

— Мĕн, мĕн? Мĕн калан ес? Совн-а-р к-о м-а?—тет те йулташĕ ахăлтатса кулса йараť:

— Ха, ха, ха! Респуплĕк пулман вĕтха—тет йулташĕ.

Алăк хыçĕнче темиçе ура сасси илтĕвет Кун хыççăн 5 çын кĕрсе Луккича çыхса илсе, ухмахланнă çынсен çуртне илсе кайаççĕ. Кашăк.

## Суйлавсенче.

### Пĕчĕк калаçу.




Чухăн хресчен: çук, çук... Кунта сана çул çук... ăçтан килнĕ çавăнтах кай...

Кулак (аллине чăмăртаса) у, мур пĕтерменĕ! Кăтартăпха епĕ сана...

# Йепле Шупашкар вулăсĕнче çĕнĕ Конçтитутси шухăшласа кăларни.

I.

Совет влаçĕн Конçтитутсийĕнче (тĕп саккунĕнче) каланă тăрăх, 18 çултан пуçласа мĕн виличенех Совет респуплĕкĕсенчи çынсем краштан правине илеççĕ (арçынĕ те, хĕрарăмĕ те пур пĕрех). Тата пухăва тухманшăн штрав хумалли çинчен те Конçтитутсире каламан. Çавăн пеках: суйлав ĕçĕ çинчен хаçата çырнăшăн краштан правинчен кăлармалла, тесе çырни те Конçтитутсире çук.

Çавăнпа та Шупашкар вулăсĕнчи пĕр пуçлăх çĕнĕ Конçтитутси çырма тытăннă.

— Мĕн пĕлеççĕ вĕсем мускавсем? Епĕр хамăр йал ваҫҫи çĕнĕ Конçтитутси шухăшласа кăларăпăр, тенĕ вĕсем.

Каланă, тунă.

Йалсенче йалсовет претçетаттĕлĕсем иртнĕ суйлавра çакăн пек «приккас» салатнă:

— Арçынсем пухăва 55 çула çитичен, хĕрарăмсем 50 çула çитичен тухма пултараççĕ. Тухманнисенчен 50 пус штрав илетпĕр 50—55 çултан иртнисем килтех лартчăр, пухăва тухнипе саккуна хирĕç ан пычăр, тенĕ.

Пĕтĕм вулăсĕпех вара 50—55 çултан иртнисем пысăк хуйха ӳкнĕ.

— Ех, хуйхă пире... хуйхă тенĕ пĕрисем.

— Путех ваттисене вĕлермелли саккун тухаӗ пулĕ Вилмесĕрех пире çын шутĕнчен кăларчĕç. Ех, хуйхă... Хуйхă! тенĕ теприсем.

II.

50-55 çултан иртнисем хуйхăрни çинчен пĕри, çемçе чĕрелли «Канаша» çырса п раӗ. Ун çинчен суйлав уполномочĕннăйĕ пĕлет те, сурчăксене сирпĕтсех тулхăрма, йатлаçма тытăнаӗ.

— Мĕнле апла?.. Вăл пирĕн Конçтитутсине хирĕç кайаӗ, вăл контр, епĕр ăна-а-а... тет те, хайхи „çемçе чĕрелли краштан правинчен кăлараӗ пăра хаӗ".

— Малотсы Шупашкар вулăссем!..

Алттай.

# „Ĕç пултарăвĕ ӳсет".

Пĕр-ик уйăх ĕлĕкрех,
Вунпĕр сехет тĕлĕнче
Ĕç хăпарнă сисмеллех
Електритсă стантсинче.
Тилĕ пек çеç йăпшăнса,
Кăтра майра çавăтса
Кĕрсе кайаӗ кантура
Мăн хисеплĕ счетовот.
Кĕрет, кураӗ—çуталаç
Електритсă лампасем,
Лап! сӳнтерет те лартаӗ—
Пĕтĕм çуртра пăч тĕттĕм.
Ех, мăнтарăн майрийĕ,
Ыталаӗ те чуптăваӗ;
Счетовотăн чĕрийĕ
Ĕç хакăлне хăпартаӗ...
Кун иртет те çĕр килет,
Вăхăт хуллен шăвăнаӗ;
Тепĕр майра йерĕçет,
Ун та мăшăр тупăнаӗ.
Кĕрсе ларнă тăваттăн
Управленчи пӳлĕмне,
«Вырăс йӳççи» стаканăн
Йухаӗ пурин хырăмне.
«Ĕç, чун савни, ĕç аӗа
Черкке хĕрри йантричев!
Йӳратсассăн ме тата—
Ĕç ман кăмăл туличен»...
Мĕн уссишĕн урасха
Çакă „ĕçчен" çынсене?
Хăлхисенчен çавăтса
Кăларас кун çуттине!

Çиппăтти.

# Качака—сат ăсти.

Сĕнтĕр вулăсĕнче, сат ăстисем çук пирки, вулĕçтăвком качакасенчен сат ăстисем тума хатĕрлет, тет.

Мĕкĕк—мĕкĕк качака,
Шур сухаллă ват мучи,
Майракаллă шур шуйттан
Кĕрсе кайаӗ таçта та.
Сысна кĕмен хĕсĕк-хушăк,
Сурăх каçман ракатка
Унтăн пулсан пур пĕрех
Сиксе каçма ĕçех мар.
Вулĕçтăвком пахчине
Шуратмашкăн ирĕклĕ,
Сат ăстине вĕренме
Пултараççĕ маттурсем.

Пайраш К.

# „РЕВИСОРСЕМ".

Нурăс пуштине ревиçи тума Шупашкартиге. Йетĕрнери пуштă пуçлăхĕсем пынă. Виçĕ кун хушшинче 25 четвĕрт квас. виçĕ четвĕрт суттине ĕçнĕ. Урам тăрăх купăспа ыталанса çӳренĕ. Ташлама Нурăс майрисене чĕннĕ...

(Йалтан килнĕ çыруран).

Пуш уйăхĕн пĕр кунхине Нурăс пуштине хаçатсем çырса илме. хăйсен Хĕрлĕ Çарти ывăлĕсене çырусем çырса йама пынă хресченсем пуштă алăкĕ çине урлăшпех пысăк хут çине çапла çырса çапнă хут тĕл пулнă:

| |
|---|
| Оплăçрен килнĕ начаљнĕксем пушта тĕрĕслеме тытăннă пирки, пуштă кантурĕ виçĕ кун хушши ĕçлемест. |

Алăк умĕнче чылайах хресчен пуханнă. 10-шар çухрăм килсе ыв̆ăннипе, хăшĕ крыљтса пусми çинче канса ларaççĕ. Чĕлĕмсене мăкăрлантарнă май, сăмах та çыпăçуллă пыраĭ.

— Ех, ахалех пулчĕ 10 çухрăм ланкаса килни! тет тарăхса çĕтĕкрех кĕрĕклĕ пĕр старикки

— Мĕн тăвас тен—пуштине те тĕрĕслемеллех пулĕ çав.

— Тĕрĕслемеллине пĕлетĕп теха, пустуй çӳрес килмест, мĕн ĕç йулчĕ ĕнтĕ кун пирки пайан килте, тет старик хуйхăрса.

— Сан ĕçӳ—хăвăн ĕçӳ, терĕ старике хирĕç çамрăкки,—ку ĕç—патшалăх ĕçĕ. Пушта патшалăх тытса тăраĭ, çавăнпа унăн ăна тĕрĕслесех тăмалла... Совет влаçĕ начаљнĕкне те иртĕнсе ĕçлеме памасĭ. терĕ йулашкинчен.

Калаçса ларнă хушăра пуштă кантурĕнчен те хытăрах сасăсем илтĕне пуçларĕç. Пĕри ытларах та кăшкăрса калаçаĭ,—ахăртне пуштă начаљнĕкне тустарма тытăнчĕ пулас.

Хресченсем хăлхасене чанках тăратрĕç. Кантурта шавлаççĕ, тĕпĕртетме те тытăнчĕç.

— Аĭăр, уттарăпăр килелле, кунта тăрса пĕрех епĕр вĕсене пулăшаймăпăр, терĕ старик ура çине тăрса.

— Ан кайха, Уртем пиче, кунта йурлама та тытăнчĕç, терĕ çамрăкки старике чарса.

Чăнах та пуштă кантурĕнчен йурă сасси илтĕнсе кайрĕ. Хресченсем пĕрпĕрин çине, чăр! пăхрĕç.

Хмм!...

Е хи-и! «ревиçи» тăваççĕ пулмалла кунта, терĕç хресченсем.

Нурăс пуштă кантурĕнче виçĕ кун хушши „ревиçи" пыраĭ Ревисорсем „ĕçлеççĕ", шавлаççĕ, пыр типнĕ май стаккан хыççăн стаккан йанклаттараççĕ. Нурăсри мĕн пур кваса такçанах ĕçсе пĕтернĕ—25-мĕш четвĕрт, терĕ йулашкинчен кантурти сгурăш.

— Сăмакон тавай!

Илсе килеç сăмаконе. Ĕçеççĕ.

— Тата тавай!

— Сгурăш ывăннипе халран кайса выртаĭ.

— Пуштă йамшăкне йар!

Пуштă йамшăкĕ çук, срук тухнă, тет.

Çĕнĕ йамшăк тытаççĕ. Йамшăкăн лашасем вăйлă, сăмакон туртарма пултараççĕ.

Нурăсра сăмакон пĕтнĕ, ытти йалсенче те пĕтсе пыраĭ, тет.

— Мĕн тăвас?

— Тавай кармуњ, тавай майра.

Илсе пыраççĕ кармуњ, чĕнсе пухаççĕ майрасем.

— Йурлăр, ташлăр, е ех!

Бывало в дни веселые
Гулял я молодец.....



Çапла ревиçи пулчĕ Нурăсри пуштă кантурĕнче.

Çак ĕç март уйăхĕнче пулчĕ, анчах хресченсем хаљ те манмаççĕ ăна, манас та çук.

Хаљ те урамра ӳсĕр çын курсан Нурăс хресченĕсем пĕр пĕрин куçĕнчен, кăв! пăхса

— Ревиçи членĕ, теççĕ.

Патман.

# КОППЕРАТТИВСЕНЧЕ.

## Тĕттĕм-касри „Йурăхсăр“ йатлă копператтив членĕн тневникĕ*).

Хевралĕн 1-мĕш кунĕнче. 1924-мĕш çул.

Пайан пухура пултăм. Йакку Йăванĕн Саңккийĕ тăрăшнипе, копператтив уçрăмăр. Лавкка пулаť, терĕ. Таварсене малалла йўнĕ хакпах илетпĕр. Хĕпĕртетĕп. Лавккана таварсем илсе килсен, арăма саппунлăх илсе пама пултăм. Малалла сахăрсăр чей ĕçместпĕр ĕнтĕ, кăраççинсăр ларас çук... Саңккă ава/ах сутăçă пулнăскер, сутма илме пĕлекен шанчăклă çын.

13-мĕш числара.

Тавар илсе килнине пĕлсен, лавккана чупрăм. Чупни ахалех пулнă. Пире кирлĕ таварсем килейменха. Пирускă па кăнахветкăсăр пуçне урăх нимĕн те килмен. Пире кирлĕ йапаласем çул çинче килме тухнă, тет. Çулĕ такăр пултăр! Арăм çилленнĕ, тутисене тăснă. Меншĕн çилленнине пĕлеймерĕм. Ир тăрсан сулахай ури çине тăнă пуļ...

29 мĕш числара.

Пайан ирех лавкана тавар килнĕ, Ăна пĕлсен васканипе пит çумасăрах лавкана чупрăм,—тăвар пĕтнĕчĕ. Тăварĕ килнĕ те, анчах... Анчах хаклăраххи пулнă. Ĕлĕк улпутсем çинĕ тăвар пулмалла. Çаппах та 5 кĕренкке илтĕм, мĕншĕн тесен çăкăр-тăварсăр пурăнма хĕнтерех. Кăраççин та килнĕ, анчах кăраççинĕ те ĕлĕк Микулай патша çутнийех пулнă пулмалла, пасартинчен 3 пус хаклă. Пурăна-киле пурте йўнĕ пулĕха.. Киле çитрĕм. Арăм каллех çилленнĕ. Алăка шалт-шалт хупкаласа çўрет, тутисене мăрт тытнă. Кăнтăрлахи апатчен пĕр сăмах та чĕнмерĕ. Йашкине те хамах антарса çирĕм. Мĕн чĕмере?.. Йашка çине тăвар йаратăп йаратăп, калаймасť. Уçипех уçласа йарсан тин каларĕ Ак мĕнле: улпутсен тăварĕ хăватлă пулайман икен; вĕсем тутлă çиме вĕреннĕскерсем (сахăрлă шушкă çисех пурăннă пуļ вĕсем) тăварлă çиме йуратман.

Хевралĕн 1-мĕш кунĕ. 1925-мĕш çул.

Копператтив уçăлни пайан çулталăк çитрĕ. Таварсем пасартинчен хаклă. Саңккă копператтив йачĕпе кăçал 1000 пăт тырă 40-шер пуса илсе 1 тенкĕ çурра сутрĕ. Ак, мăштарăн ыр çынĕ—хăй те усă кураť, копператтивра та ĕçлет. Ăсĕ пур çав!.. Арăмпа кашни кунах йатлаçатпăр. Саппунлăх илсе паманшăн та çиллевсе çўрет, кирлĕ йапаласем туйанманшăн та йатлаçаť. Ман мĕн тăвас? Копператтивра пире кирлĕ йапаласем халĕ те çук, пулсан та хаклă. Пасарти усламçăсене усă парас килмест. Хамăрăн лавкаранах таварсем илсе, копператтив пулăшмаллине пĕлмест çав манăн арăм. Ахаļ мар пуļ çав: хĕрарăмăн çўçĕ вăрăм, ăсĕ кĕске, теççĕ.

Мартăн 11-мĕш кунĕнче.

Виçĕм кунхи „Канаш“ хаçатра пирĕн копператтивăн ĕç кĕнекисем тĕрĕс мар терĕ (Саңккă хут лайăх пĕлетçке! Ĕç нумай пулнипе çырса пыма ĕлкереймен пуļи анчах). Каçпа пухă улчĕ. Инструктăр пире Саңккă чавса тăршшех лартса пынине ăнлантарса пачĕ. Урăх, чухăн çынна суйласа лартрăмăр. Ах, мур! „Капкăна“ лектермелле ăна, Килте мана арăм чуť турчăкапа тĕкмерĕ.

Апрелĕн 5-мĕш кунĕнче.

Çĕнĕ претçетаттĕл, чухăн çын пулсан та, пит аван ĕçлет. Арăмпа йатлаçма пăрахрăмăр Чей сахăрпа ĕçетпĕр. Ĕлĕк, вăрçă чухне, сакайне кайса лартнă пысăк лампа çутатса йатăмăр. 3 çулхи ачана йĕмлĕх илсе патăм. Пайан хĕпĕртенипе арăма виçĕ хут чуптуса илтĕм.

Çырса илнĕ Йăвăн мучи.

---

*) „Тневник“ тесе кашни кун мĕн-мĕн тунине çырса пымалли кĕнекене калаççĕ.

# Йăван мучи капкăнне ҫакланнисем.

Сывăи, йулт шсем!

Кăптăр каптăр кăп-кăп! Манăн капкăн кап-кап Охо! 'Ҫакланнă та пӗри. Ку, леш, Кусар Кӗркури (Хыйма-кассисем, Шурча вулăссем). Ку ҫын хыйма йуратаĭ, турăх лексен пӗрӗхсе парахаĭ. Вăл тырăпа сут тăваĭ, паттент илме манса пыраĭ, чухăнсене хӗсӗрлет, вăйсăрсене хӗнет, кунӗн-ҫӗрӗн ӗҫет. Йалсоветне тепӗр хут суйламалли пухура ҫав кулак та пулнă, сасă парса тăнă.

Кусарсенене йакалатма, куштансене куштркатма кулаксене кăмпалатма, пире шăпăр кирлӗчӗ, шăпăр хулли тумашкăн, пӗрлешмелелле пулнăчӗ, шăпăр аври тумашкăн йуман патак кирлӗчӗ „ырҫынсене" шăлмашкăн ыр ачасем, комсомолсем кирлӗчӗ.

Таррт! Кап! Ҫакă ӗнтӗ Тирмӗч-касси Йамшăк Елекҫи! Вулăс йачӗ Кӗчӗкей (ан ман ăна, кинемей). Йалсовет урлă темле майпа 14 ҫыншăн 4 кварттăл вăрман илнӗ. Ҫав вăрманăн ҫуррине сутнă йанă Трухиме Кӗчӗкейри пуйана. Йалсоветне улталанă, ҫын вуттине сутнă йанă. куншăн ăна капкăн хыпнă. Йамшăк Лекҫи, йамшăксăрах леҫери сана чуллă тӗрмене, Совет саккунне пӗлтерме.

Ай-ай! Милитсисем, килӗр; вулсоветсем, итлӗр. Капкăна ҫӗмӗрсех кайасшăн, ытла та нумайăн! Пӗр пин ҫынна йахăн. Кусем пурте кулаксем, сутăҫăсем, чухăн йувне ӗҫекенсем. Ҫӗнӗрен паттент илнӗ чухне, хаҫат илмеллине маннă кайнă. Ман капкăнран хăраса, хаҫат илесрен пăрăнаҫҫӗ, 3 тенкӗ шеллеҫҫӗ. Капкăна кышласа татасшăн, «Качаша» ҫăтса йарасшăнщăлӗсемпе кăчăр кăчăр тăваҫҫӗ, куҫӗсемпе чăр чăр пăхаҫҫӗ. тутисенчен сухал ҫине сурчăк йухаĭ, мăш-мăш туса сăмсисенчен туги ҫине тăр шыв йухаĭ, куҫ-пуҫӗнчен хӗлхем тухаĭ.

Милитсисем, хаҫат туссем! Ҫавă тискер кайăксене, асавшăллă ҫăртансене Опӗҫтăвком тусăн опесаттӗлнăй постановленипе паллаштарăр.

Вăрăм сăкманлă, сар калпаклă ҫын килет, хăй пӗлӗт ҫинелле пăхаĭ, хăрах аллипе сăхсăхаĭ, тепӗр алливче курҫинкка, курҫинккара ҫăмарта. Урам тăрăх пыраĭ турăх йăтса пӗр арăм. Хаҫхи ҫын унăн чӗрессине уҫсах пӗшкӗнсе пăхаĭ. Кам ку хăйамат? Тррт шат! Ленкрӗ капкăна. Выртрӗ сарăлса. Ку ҫын Мами вулăсенчи Ача йалӗнчи пуп мучи пулнă мӗн. Ҫав пупа йалти ҫынсем туйапа хăвалаҫа, йытăпа ӳскӗртсе кăларса йама тапратнă та, пупӗ йал куштапӗсене пухнă та, 40 четвӗрт сăмакункка, тата пӗр пăт шушкă ӗҫтерсе—ҫитерсе пӗтернӗ. Ӗҫнӗ хыҫҫăн, халăхран вăрттăн, прикăвăр тутараĭ те ҫав йалтах йулаĭ.

Асăрхăрха: пуп халăха турăпа та пуҫ ҫавăраĭ, ерехпе те тăрантараĭ. Амин, амин! Куҫа курăнмин. . Пупсенчен уйăрлар—Ача йалӗсем пулсан та текех епӗр ача мар.



Ну, ҫитӗ ӗнтӗ пайанлăха. Ыран тата тытăпăрха. Йуратнă вулакансем, Йăван мучийа ырлакансем ҫавăн пек шампасем, тискер шăллă кайăксем ҫинчен есӗр мӗн те пулин илсессӗн, Йăван мучуна систерӗр.

Ну, халӗ сывă пулăр, усал йатпа ан асăнар.

Йăван мучи мыскараҫă.

---

## Шупашкар пасарӗнче.

— Йăван Йăванч, темме йапаласем кайми пулчӗҫ.

— Нумай тăмасĭ, кайма тапратаĭ. 1-мӗш числа ҫитсен вӗренекенсем стипенти илме тапратаҫҫӗ. Вара ҫемӗчкă, паппируе, майăр кайма тапратаĭ.

Йерикке.

## „Ханша“

(«Чӗлӗм йури» майлӑ).

Тӗнче ашшӗ,
Ырӑ ханша!
Мухтав сана
Йӳҫӗ тус.
Санӑн ырӑ
Пӗр стаккану
Тӑраӗ вӗтӗ
Аллӑ пус.
Сана кленче,
Стакан ҫине
Йарса тытса
Ларатпӑр.
Санӑн хитре
Сӑну ҫине
Савса пӑхса
Тӑратпӑр.
Сыпиченех
Малтан халӗ
Тутасене
Ҫуллатпӑр.
Майпентерех
Васкамасӑр
Йанкӑр йанкӑр
Ҫӑтатпӑр.
Пӗрик стаккан
Вара йарсан—
Чух машлатса
Ларатпӑр.
Тепӗр курка
Тата парсан—
Выҫ ларнине
Манатпӑр.
Хамӑр вӑ..сӑр
Пулсассӑн та,
Санпа вӑрҫма
Пӗлетпӗр.
Тепӗр ухмах
Тупӑнсассӑн
Ҫапӑҫма та
Пӑхатпӑр.



## „Лайӑх“ канаш пани.

Нӑрвашри Хвати Карачӑмӗ, 3-мӗш круппӑра шутланса тӑракан инвалит Ҫӗрпӳ хулинчи пӗр пуҫлӑхӗ патне пынӑ та, хӑй нушти ҫинчен калама тытӑннӑ.

— Ҫапла, ҫапла... Манӑн ӗлӗк арман пурчӗ. Халӗ вӑл ахалех питӗрӗнсе лараӗ. Хам аманнӑ ҫын, ӗҫлейместӗп. Ҫав арманпа манӑн инвалит шучӗпе паттентсӑр усӑ курма пулмасӗши? тенӗ вӑл.

— Йураӗ, тенӗ пуҫлӑхӗ, анчах санӑн малтан ҫуртӑнтан, выҫӑх-чӗрлӗхрен, пӗтӗм хуҫайствӑран «откасаӗҫа» тумалла пулаӗ, тенӗ.

Ҫавна илтет те, Карачӑм инвалит хӑвӑртрах хуларан тухса тараӗ.

— Тӗп пултӑр ку хула... Мур, усал, вилӗм сунакан... Чорт! тесе Карачӑм 35 ҫухрӑм хушши вара Нӑрваша ҫитиченех тарӑхса пыраӗ.

Алттай.

Чӗре патне
Пыратӑн ес.
Ҫавӑнпа пуҫ—
Ӗҫеҫҫӗ.
Чунтан вартан
Пит йуратса
Кантуртисем
Йараҫҫӗ.
Курка тӗпне
Кӑтартнипе
Пире ӗҫме
Хушаҫҫӗ.
Хӑйсем хытӑ
Ӗҫнипеле
Пире ӗҫме
Чармаҫҫӗ.
Анчах темме
Пӗлме хал ҫук
Комунистем
Ӗҫмеҫҫӗ.
Ӗнтӗ ханша,
Ӗмӗр сыв пул,
Сана пурте
Мухтаҫҫӗ

Хӗрлӗ ҫиҫӗм.

# Мункун типпинче.

Чакак пиче нихăçан та ураса тытса пăхман. Унтан пуп тарçи пулнăскер Чакаҫа пĕрре: ма ураса тытмастăн, тесе ыйтсан, вăл кулса çапла каланă.

— Ураса тытнă чухне пупсен урине тыттараççĕ, тет. Пуп урине тытмăттăм, пуп урине курмăттăм, инке-арăм илмĕттĕм, çылăх мĕнне пĕлмĕттĕм, тенĕ.

Çапах та, пупсене ĕненмест пулсан та, пуп тавраш̆ĕсем сĕтĕрĕнсе çитсен, вăл вĕсене пыл та çу çитерсе йарать. Леш «шăршлине» те ĕçтерет, çупа чăхăт ăшаласа парать, пупсем майлă шутарса калаçать.

Хресченсем тĕлĕнеççĕ:

— Мĕнлеха ку Чакак хăта? Хăй: пупсене, йытă патака йуратнă пекех йурататăп, тет. Пупсем умĕнче çатма çинчи çу пекех ирĕлсе кайать... Чакак пиче тăнсăр мар, тилĕ пекех пит чейе.

Вăл шухăшлать:

— Арăм вăхăтсăрах вилсе карĕ. Çуркуннесем çитнĕ майĕпе авланас шухăш кĕме пуçларĕ. Хам çамрăк. Çын арăмĕсем хыççăн йуртса çўричен авланса йама та йурать. Урçа тесе мана лайăх хĕрех пырас çук. Пупсăр венчет тумалла тусан, пĕр хĕр те кача пымĕ тата. Ирĕксĕрех пупсем майлă шутарас пулать

Чиркў чанĕ хуйхăлăн „кҫам"!—тесе татах çухăрса йарать.

Чакак та ураса тытма шухăшланă. Ернипех килте ларса чан çапнисене итлесе ларать. Ернекун çитсен, тўрех çылăх каçарттарма тесе чиркўве кайма тухать. Пурĕ пĕр пуп хирĕçленсе тăрас çук, тус-йус майĕпе.

Чиркўве каймалли çул пăсăлса кайнă. Çаванпа ăна ĕне çулĕсемпе, сурăх çулĕсемпе кайма тивнĕ. Мункаш шывĕ хĕрипе кайнă чухне тетел (шакă) курнă кайнă. Тетелĕнче пулă туп туллиех. Мĕн тăвас? Куна вăрлама май килместши? Пуллисене тетелрен силлесе кăларать те, чăршă кутне пытарать.

„Çылăх каçарттарма" тесе чиркўве пырать те, черет çитсен, пуп патне пырса тăрать.

Пупĕ чи малтан хĕрес чуп тума хушать. Кайран пуçне унăн саппунĕ айне чикме хушать.



— Менле çылахсем турăн? Нимĕн пытармасăрах каласа пар...

Чакак йăл кулса илет. Çылăхсене каласах пулать.

— Çылăхлă, пит çылăхлă. Йăмăка йатланă чухне «маттершчинă» каларăм, вырсарни кунсем уйра ĕçлерĕм, типĕре турăх çирĕм, çын варлине хапсăнтăм...

Пурин çинчен те каласа кăтартрĕ. Тетелри пулăсем çинчен те каламасăр хăвармарĕ:

— Кунта килнĕ чухне çын тетелĕнчи пулăсене туртса кăлартăм...

— Пуллине ăçта хутăн?—тесе ыйтать пупĕ.

— Чăршă айне пытартăм.

Каç пулнă. Чакак чиркў хурал пўртĕнчех çывăрнă. Тепĕр кунне, чиркўрен киле кайнă чухне, çав пулăсем çинчен аса илнĕ. Чăршă кутне пырать те, пулăсем çук. Шырать—шырать. Çук! Вĕçрĕç пулăсем!

— Ах, вăрăм çилхе!.. Пулла вăрласа кайнă. Ма каларăмши вăл çылăха? Кам хĕрĕпе пурăннине каланă пулсан ман савнине те хăй йенне çавăрса илсе кайатчиха ку? Пуп Йăван, пуп Йăван, пулă çиме хыпкаланчăк, çын арăмпе хускаланчăк, йал хушшинче йавкаланчăк, турă умче турткаланчăк, тесе пупа витлесе йара парать çылăхсăр Чакак килнелле.

Йăван.

## Путăн çÿçĕ те вăрăм. ăсĕ те „вăрăм“!

Çĕрпÿ уйесĕнчи Кивĕ-Каркая пупĕ—Похоттинăв Комуниссен парттине кĕме сайавлени панă. Сайавленинче вăл:—Епĕ пупа кĕриччен парттире тăнăччĕ, анчах арăм куççуҫпе йатлаçнине кура, парттирен тухса пупа кĕтĕм, тет.—Пупра чухне те епĕ йаланах партти ĕçне туса тăтăм, анчах унта та арăм кансĕрлесе тăчĕ; халĕ ĕнтĕ арăмран уйăрлас, тетĕп, ирĕклĕ враштăн пулса Шупашкара ĕçлеме куçас, тетĕп, тет.—Хăй пупра чухне партти ĕçне «туса» тăнине вăл çапла çырса ĕнентерет... «У меня в данное время в приходе живут без венцов 63 пар граждан..

Теперь же все это хочу послать к чортовой матери (чĕлхи, чĕлхи мĕнле!—У.) и поступить в какую нибудь на должность... так как я могу теперь дать из поповской жизни громадный материал для агитаций и сцен... против религии и поповщины. А потому я убедительно прошу принять меня членом РКП и дать мне место на какую нибудь должность»...

«С истинным почтением прибываю с товарищеским приветом бывший и будущий ярый комунист Петр Богатинов».

## Çветтуй сывлăша йĕме çĕлесе лартнă.

Ĕлĕк пĕр вĕренекен ача виç ипостаçлă турă йачĕсене пĕлсе çитереймен. Пупĕ вĕрентнĕ-вĕрентнĕ, нимĕн усси те çук, вĕренсе çитеймест. Пуп çилленсе кайнипе нимĕн тума та пĕлмест.

— Акă сана виçĕ тÿме. Çак тÿмесем турăн ипостаçĕм пулчăр. Пĕрри атте турă пултăр.

— Атте турă.—тесе пыраĭ ача пуп хыççăн.

— Ку ывăл турă.

— Ывăл турă.

— Виççĕмĕш—çветтуй сывлăш турă.

— Сывлăс турă.

Тепĕр ерне иртсен, пуп çав ачаранах виç ипостаçлă турă çинчен ыйтаĭ.

Пĕркунхи урока каласа парха. Вĕрентĕни?

Вĕрентĕм. Ку атте турă (кăсйинчен пĕр тÿме туртса кăларат)

— Ку ывăл турă (тепĕр тÿмине кăлараĭ).

— 3 мĕш ипостаç мĕн йатлă?

Ача нимĕн те шарламасĭ.

— Мĕн, манса карăни мĕн?

— 3 мĕш... 3 мĕш. Çветтуй сывлăса анне йĕме çĕлесе лартнă, тет кĕпине уçса хаҫхи ача.

Й-п

## Капкăн, кап! хып.

Çăпан - суран,
Йухан - шăтан
Чăваш йалне
Çĕртет пулсан,
Капкăн, кап! хып.
Йал канашне
Хăй тупăшне
Сарма кĕнĕ
«Ырçынсене»,
Капкăн, кап! хып.

Ÿсĕр тĕсе
Ÿкĕтлесе:
Ĕссыннине
Варлан—тесе,
Капкăн, кап! хып.
Мăнтăр пупа—
Харам пыра,—
Нÿхреп куçлă
Намăссăра,
Капкăн, кап! хып.

Çиппăтти.

Чувашоблит № 1030. Чебоксары, Тип. Чувашгосиздата.